К
П91
1 18385. чув.

А. С. ПУШКИН



# КИРДЖАЛИ

КНИГОХРАНИЛИЩЕ
ЦБУ. Ч.ССР.

## А. С. ПУШКИН

К Р1
П91
Б

КНИГОХРАНИЛИЩЕ
ЦЯУ. ЧАССР.
Инвент. № 6

# КИРДЖАЛИ



*Вырăсларан*
***В. Хударсем***
*куçарнă*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

м 18385-44в

Чувашская республиканская
библиотека
им М. Горького

Редактор **Н. Ф. Ильбеков.**

НТ 6526. Подписано к печати 27/IX-1941 г. Заказ № 325
Объем 0,5 п. л., уч. авт. л. 0,3 Тираж 2500 экз.

Тип. № 1 Управл. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР
гор. Чебоксары, Дом печати.

ЦАУ. ЧАССР.
Инвент. № 6



# КИРДЖАЛИ

(ПОВЕСТЬ)

Кирджали булгар йăхĕнчен пулнă. Кирджали турксен чĕлхинче паттăр, маттур тенине пĕлтерет. Унăн чăн-чăн ятне эпĕ пĕлместĕп.

Кирджали хăйĕн вăрă-хурахла ĕçĕсемпе пĕтĕм Молдавине хăратса тăнă. Ун çинчен кăшт ăнлантарас тесе, унăн паллă ĕçĕсенчен пĕрине каласа парам. Пĕррехинче, каçпа, вăл тата арнаут Михайлаки, иккĕш пĕрле, булгар ялне тапăннă. Вĕсем çав яла икĕ вĕçĕнчен чĕртсе янă та, пÿртрен пÿрте çÿреме пуçланă. Кирджали сынсене вĕлерсе пынă. Михайлаки çаратнă япаласене йăтса пынă. Иккĕшĕ те: Кирджали! Кирджали!—тесе кăшкăрнă. Пĕтĕм ял халăхĕ тарса пĕтнĕ.

Александр Ипсиланти, тарăхса пурăнни çинчен халăха пĕлтерсе, хăйне валли çар пуçтарма тытăнсан,—Кирджали ун патне хăйĕн темиçе ĕлĕкхи юлташне илсе пынă. Этерин чăн-чăн тĕллевне вĕсем начар пĕлнĕ, анчах вăрçă вĕсемшĕн турксен шутĕнчен пуймалли май пулнă: тен, молдавансен шутĕнчен пуймалли май та пулнă,— çакă вара вĕсемшĕн пулас пекех курăннă.

Александр Ипсиланти хăй паттăр та хастар пулнă, анчах та çав тери вĕриллĕн тата çав тери шикленмесĕр тума йышăннă роль валли унăн кирлĕ пахалăх пулман. Вăл хăй ертсе пымалли çынсемпе килĕштерме пĕлмен. Вĕсем ăна кăмăлламан та, шанман та. Грек çамрăкĕсен вăйпитти çынĕсене вĕлерсе пĕтернĕ телейсĕр çапăçу хыççăн, Иордаки Олимбиоти ăна вырăнтан пăрăнма канаш панă, хăй вара унăн вырăнне кĕрсе ларнă. Ипсилантийĕ Австри чиккисем патнелле вĕçтернĕ, унта вара хăйĕн çынĕсене: эсир итлеменсем, хăравçăсем, юрăхсăрсем тесе, ылханса пурăннă. Çав хăравçăсемпе юрăхсăрсенчен нумайăшĕ Секу монастырь стенисем хушшинче е Прут çыранĕсенче хăйсенчен вунă хут

вăйлăрах тăшмана хирĕç хаяррăн çапăçса вилнĕ.

Кирджали ун чухне Георгий Кантакузин отрядĕнче пулнă, Кантакузин çинчен Ипсиланти пирки каланинех калама пулать. Скулян патĕнче çапăçас умĕн Кантакузин вырăс начальствинчен пирĕн карантина кĕме ирĕк ыйтнă. Отряд ертсе пыракан çынсăрах тăрса юлнă, анчах Кирджали, Сафианос, Кантагони тата ыттисем те нихăш енчен те ертсе пыракан кирлине курман.

Скулян патĕнчи çапăçу çинчен, унăн тĕлĕнтерсе яракан пĕтĕм чăнлăхне кăтартса, никам та çырман пулас. 700 çын çинчен— арнаутсем, албансем, грексем, булгарсем тата ытти тĕрлĕ çĕртен пухăннă çынсем çинчен, çар искусствине пĕлменскерсем, турксен вунпилĕк пин лĕ утлăçарĕ хĕснине пула, каялла чакакан çынсем çинчен шутласа илĕр-ха. Çак отряд Прут çыранĕ патне пырса хĕсĕннĕ те хăй умне икĕ пĕчĕк тупă кăларса лартнă; вăл тупăсене Яссăра, господарь килкартинче, тупнă пулнă; çав тупăсенчен вара менелниксенчи ĕçкĕ-çикĕсем вăхăтĕнче перкеленĕ. Турксем

картечпе пеме хавас пулнӑ пулӗччӗҫ, анчах вырӑс начальствин ирӗкӗсӗр хӑяйман: картечӗ пурпӗрех пирӗн ҫыран ҫине каҫса ӳкнӗ пулӗччӗ. Карантин пуҫлӑхӗ (халӗ вӑл вилнӗ), хӗрӗх ҫул ҫар службинче пулнӑскер, пуля шӑхӑрнине ҫуралнӑранпа та илтсе курман, анчах турӑ ӑна ҫакӑнта илтмелле тунӑ. Темиҫе пуля унӑн хӑлхисем патӗнчен сӗрлесе иртнӗ. Старик питех те хытӑ ҫиленсе кайнӑ, вара Охотски пехотнӑй полк майорне, карантинра пулнӑскерне, хаяррӑн ятласа тӑкнӑ. Майор, ним тума пӗлмесӗр, ҫырма патнелле чупса кайнӑ; ҫырма патӗнче делибашсем лашисене ташлатса тӑнӑ, майор вӗсене пӳрнипе юнанӑ. Делибашсем, ҫакна курсан ҫавӑрӑннӑ та тарнӑ, вӗсем хыҫҫӑн турксен пӗтӗм отрячӗ тарнӑ. Пӳрнипе юнанӑ майора Хорчевский тесе чӗннӗ. Ӑна кайран мӗн пулнине пӗлместӗп.

Тепӗр кунне, ҫапах та, этеристсене атакӑланӑ. Ни картечсемпе, ни йӗтресемпе усӑ курма хӑяймасӑр, вӗсем хӑйсен яланхи майне хирӗҫлесех, хӗҫ-штыксемпе кӑна усӑ курма йышӑннӑ. Ҫапӑҫу хаяр пулнӑ. Пӗр-пӗрне ятагансемпе каснӑ. Турксем

енче сăнăсем курăннă, вĕсен ун пек сăнăсем ку вăхăтчен пулман: çав сăнăсем вырăссен пулнă: турксен ретĕнче некрасовецсем кĕрешнĕ. Этеристсем, хамăр государь ирĕк панипе, Прут урлă каçса, пирĕн карантина пытанма пултарнă. Вĕсем вара каçма тытăннă. Кантагони тата Сафьянос турксен çыранĕ енче кая юлнă. Кирджали малтанхи кун аманнăскер, карантинра выртнă. Сафьяноса вĕлернĕ. Кантагонине, пит те мăнтăр çынна, хырăмĕнчен сăнăпа чикослатнă. Вăл пĕр аллипе хĕçне çĕкленĕ, тепĕр аллипе тăшманăн сăннине ярса тытнă, ăна хăйĕн хырăмне тата та шаларах кĕртнĕ те, çапла майпа вара, хăйне вĕлерекен çын патне çывхарса, ăна хĕçпе касса вĕлернĕ, унтан хăй те унпа пĕрлех йăванса аннă.

КНИГОХРАНИЛИЩЕ
ЦАУ. ЧАССР.
Инвент. №

Ĕç пĕтĕмпех пĕтнĕ. Турксем çĕнтернĕ. Молдавине тасатнă. Арнаутсем ултă çĕр çын таран Бессараби тăрăх саланса кайнă; хăйсене мĕнпе тăрантарассине пĕлмен пулсан та, вĕсем Российăна, вăл хута кĕрсе пулăшнăшăн, тавтунă. Çав арнаутсем ĕçлемесĕр, анчах иртĕнмесĕр пурăннă. Çак çынсене çурма-туркăлла Бессарабире ялanax кофейнăйсенче курма пулнă, вĕсем

унта, чĕлĕмсен вăрăм чăпăкĕсене çăвара хыпса, пĕчĕк чашкăсенчен çăра кофĕ ĕçеĕçе ларнă. Арнаутсен ула пиншакĕсем, шĕвĕр сăмсаллă хĕрлĕ туфлисем çĕтĕле пуçланă, анчах та çăмламас скуфейкисене халĕ-те-ха пуç тӳпине лартса çӳренĕ, вĕсен сарлака пиçиххисем хушшинче çаплах ятагансемпе пистолетсем çакăнса тăнă. Вĕсем çине никам та ӳпкелешмен. Çак лăпкă мĕскĕнсем—Молдавири паллă вăрăхурахсем, хаяр Кирджали юлташĕсем пулни çинчен тата вăл хăй те çав çынсем хушшинчех пулни çинчен шухăшлама май та пулман.

Яссăра пуçпулса тăракан паша çакăн çинчен пĕлнĕ те вырăс начальствинчен çав вăрă-хураха мирлĕ договорсем тăрăх пама ыйтнă.

Полици ăна шыраса йĕрлеме тытăннă. Кирджали чăнахах та Кишиневра пулнине пĕлнĕ. Ăна таркăн монах çуртĕнче, каçпа, çичĕ юлташĕпе пĕрле тĕттĕм çĕрте апат çисе ларнă чухне тытнă.

Кирджалине хурал аллине парса хупса лартнă. Вăл чăннине пытарман, хăй Кирджали пулнине каласа панă. „Анчах, тенĕ

вăл, Прут урлă каçнăранпа эпĕ çын пурлăхне çӳç пĕрчи чухлĕ те илмен, пĕр цыгана та кӳрентермен. Турксемшĕн, молдавансемшĕн, валахсемшĕн, паллах, эпĕ вăрă-хурах, анчах вырăссемшĕн эпĕ хăна. Сафьянос, хăйĕн мĕнпур картечне персе пĕтерсе, юлашки зарядсем валли аманнă çынсенчен тӳмесем, пăтасем, ятагансем çинчен пăчăрасемпе чăмăрташкасем пухса илсе, пирĕн пата карантина килсен,—эпĕ ăна çирĕм бешлык патăм, хам укçасăр тăрса юлтăм. Эпĕ, Кирджали, ыйткаланипе пурăннине турă курать! Мĕншĕн-ха вырăссем халĕ мана хамăн тăшмансен аллине параççĕ?“ Кун хыççăн Кирджали чĕнме пăрахса, хăйĕн ĕçĕ мĕнле татăлса пĕтессине лăпкăн кĕтме пуçланă.

Вăл нумаях кĕтсе ларман. Вăрă-хурахсем çине вĕсен романтикла енĕнчен пăхма тивĕçлĕ мар начальство, паша ыйтнă требованисем вырăнлă пулнине ĕненсе, Кирджалине Яссăна ăсатма хушнă.

Ăслă та çемçе кăмăллă çын, ун чухне паллă мар çамрăк чиновник, халĕ пысăк вырăн йышăнса тăраканскер, Кирджали кайни çинчен мана çапла каласа пачĕ.

Тĕрме алăкĕ умĕнче почта каруçи ларатчĕ... (Тен, эсир каруçа мĕн иккенне пĕлместĕр пулĕ. Вăл—çатанлă, лутра урапа, нумаях пулмасть ĕлĕкрех ăна ултă е сакăр ырхан лаша кӳлетчĕç. Уссиллĕ молдаван, путек тир çĕлĕкĕ тăхăннăскер, çав лашасенчен пĕрин çине утланса ларса, кашни минутрах кăшкăрса, вĕсене пушăпа çапатчĕ, унăн вара ырхан лашисем хăвăрттăнах юртса малалла чупатчĕç. Вĕсенчен пĕри юла пуçласанах, вăл ăна, усал сăмахсем кала-кала ятласа, унăн пурăнăçĕ çинчен ним шутламасăр, тăварса çул çине пăрахса хăваратчĕ. Каялла таврăннă чухне, ăна, симĕс хирте лăпкăн çӳрекенскере, çав вырăнтах тупасса вăл шаннă. Пĕр станцăран сакăр лашапа тухнă çулçӳревçĕ тепĕр станцăна пĕр икĕ лашапа çеç пыни те час-часах пулкаланă. Çакăн пек пулнă вунпилĕк çул ĕлĕк. Халĕ ĕнтĕ вырăсланса кайнă Бессарабире çынсем вырăссен урапине тата лаша таврашне илсе йышăннă).

Çавнашкал каруçа 1821 çулта, сентябрь уйăхĕн пĕр юлашки числинче, тĕрме алăкĕ умĕнче тăнă. Еврей хĕрарăмĕсем, çанни-

сене чăсса ярса, туфлисемпе таплаттарса пырса, арнаутсĕм çĕтĕк те илемлĕ тумĕсемпе пырса, яштак пӳллĕ молдаванкăсем, хура-куçлă ачисене алăсем çинче тытса, каруцăна хупăрласа илнĕ. Арçынĕсем нимĕн те шарламан; хĕрарăмĕсем темĕскере пĕтĕм чĕререн кĕтсе тăнă.

Алăксем уçăлнă та, полицин темиçе офицерĕ урама тухнă: вĕсен хыççăн икĕ салтак сăнчăрланă Кирджалине кăларнă.

Кирджали пĕр вăтăралла çитнĕ çын пулнă. Унăн хура тĕксĕм пичĕ чиперрĕн те хаяррăн курăннă. Вăл çӳлĕ кĕлеткеллĕ, сарлака хулпуççиллĕ çын; пĕтĕмĕшпе илсен—унăн ӳт-пĕвĕ вăл пит те вăйлă пулни çинчен каланă. Пуçне ула-чăпар чалмапа чалăшшăн çыхса витнĕ, çинçе пилĕкне сарлака пиçиххи çыхнă; симĕс хулăм пуставран çĕленĕ доломан, чĕркуççирен вăрăм, хуçланчăклă кĕпе, хитре туфлисем,—акă мĕнле пулнă унăн çийĕнчи тумĕ. Сăнĕпе вăл мăнаçлă та лăпкă пулнă.

Чиновниксенчен пĕри, хĕрлĕ питлĕ старик, çапкаланса тăракан виçĕ тӳмеллĕ, шупкаланса кайнă мундир тăхăннăскер, сăмса вырăнче пулнă хĕп-хĕрлĕ мăкăльне

тăхлан куçлăхĕпе хĕстернĕ те, аллинчи хутне уçнă, унтан вара молдаван чĕлхипе, сăмса витĕр, вула пуçланă. Вăхăтран вăхăта вăл сăнчăрланă Кирджали çине мăнаçлăн пăха-пăха илнĕ,—хучĕ, ахăртнех, ун çинчен çырнăскер пулмалла. Кирджали ăна тинкерсе итленĕ. Чиновник хăйĕн хутне вуласа пĕтернĕ, хутне хуçлатса хунă, унтан халăха саланма хушса, хаяррăн кăшкăрса илнĕ,—вара хăй патне каруца илсе килме хушнă. Кун хыççăн Кирджали ун патне пынă та, молдаван чĕлхипе темиçе сăмах каланă; сасси унăн чĕтĕренĕ, пичĕ шуралса кайнă; вăл макăрса янă та, хăйĕн сăнчăрĕсемпе чăнкăртаттарса, полицейски урисем патнелле йăванса аннă. Полици чиновникĕ, хăраса, каялла чакнă; салтаксем Кирджалине çĕклеме шутланă, анчах та вăл хăех тăнă, сăнчăрĕсене тирпейлесе тытнă, каруца патнелле утнă та: айтăр! тесе кăшкăрнă. Кирджали патне жандарм пырса ларнă, молдаван хăйĕн лашине пушăпа çапнă та, каруца вара тапранса кайнă.

— Сире Кирджали мĕн иларĕ?—ыйтнă çамрăк чиновник полицейскирен.

— Вăл мана (куратăр-и),—ответленĕ кулса полицейски,—Килирен инçе мар, булгар ялĕнче пурăнакан арăмĕпе ачин хутне кĕме ыйтрĕ,—вăл хăрать, вĕсене те ун пирки ăйăплĕç тесе шутлать. Халăх ухмах-с.

Çамрăк чиновник каласа пани манăн чун-чĕрене хытă хускатрĕ. Эпĕ мĕскĕн Кирджалине хĕрхентĕм. Унăн кунçулĕ çинчен эпĕ нумай вăхăт хушши нимĕн те пĕлеймерĕм. Темиçе çул иртсен тин эпĕ çамрăк чиновнике тĕлпултăм. Эпир вара иртсе кайнă вăхăтсем çинчен калаçма тытăнтăмăр.

— Мĕнле сирĕн Кирджали тусăр?—ыйтрăм эпĕ:—унăн ĕçĕ мĕнле пулса кайнине эсир пĕлместĕр-и?

— Мĕнле пĕлместĕп,—ответлерĕ вăл, унтан çакна каласа пачĕ:

Кирджалие, Яссăна илсе пырсан, паша патне илсе кайнă, паша ăна шалча çине лартса вĕлермелле суд тунă. Ăна вĕлерессине темле праçник тĕлне хăварнă. Çав вăхăтчен ăна тĕрмере тытса усрамалла тунă.

Тыткăнра ларакан Кирджалине çиччĕн сыхланă (вĕсем ахаль çынсемех тата чу-

нĕсемпе Кирджали пекех вăрă-хурахсем пулнă); турксем ăна хисепленĕ, унăн тĕлĕнмелле калавĕсене питех те хавасланса итленĕ, ун пек хаваслăх Хĕвелтухăçри халăхсен пурин те пур.

Çапла вара сыхлакан çынсемпе тыткăнри çын хушшинче çирĕп çыхăну пуçланса кайнă. Пĕррехинче Кирджали вĕсене çапла каланă:

— Тăвансем! эпĕ пĕтесси инçе мар. Никам та хăйĕн ăраскалĕнчен хăтăлаймасть. Часах эпĕ сирĕнтен уйрăлăп. Сире манăн мĕн те пулин асăнмалăх хăварасчĕ,—тенĕ.

Турксем тимлĕн итленĕ.

— Тăвансем,—тенĕ малалла Кирджали,— вилнĕ Михайлакипе пĕрле эпĕ вăрă-хурахла ĕçсем туса çӳренĕ чухне, виçĕ çул ĕлĕкрех, Яссă çывăхĕнче, хирте, эпир пĕр хуран гальбинă (укçа) пытартăмăр. Эпĕ те, вăл та çав пурлăхпа усă кураймастпăр пулмалла. Пултăр çапла: илĕр эсир ăна, хăвăр хушăрта килĕштерсе пайлăр.

Турксем савăннипе кăшт çеç ухмаха тухса кайман. Çав ырă вырăна мĕнле тупас?—тесе калаçма тытăннă. Шухăшланă,

шухăшланă та çав вырăна Кирджали хăй илсе кайтăр, тенĕ.

Каç пулса çитнĕ. Турксем тыткăнçăн урисенчен сăнчăрне салтнă, унăн аллисене пăявпа çыхнă та, Кирджалипе пĕрле хуларан хире тухса кайнă.

Кирджали вĕсене пĕр еннелле, пĕр тĕмескерен тепĕр тĕмеске патне çитерсе, илсе кайнă. Вĕсем нумайччен кайнă. Юлашкинчен, Кирджали сарлака чул патне çитсе чарăннă, кăнтăр еннелле çирĕм утăм виçнĕ, унтан урипе тапнă та: çакăнта! тенĕ.

Турксем кашнине ĕç хушнă. Тăваттăшĕ ятаганĕсене кăларнă та çĕре чавалама пуçланă. Виççĕшĕ хурала юлнă. Кирджали чул çине хăпарса ларнă та, вĕсем ĕçленине пăхма тытăннă.

— Ну мĕн, час-и?—ыйтнă вăл,—чавалаocca çитертĕр-и?

— Çук-ха,—ответленĕ турксем, хăйсем пăтăртатса тăкăнакан тар юхиччен ĕçленĕ.

Кирджали кĕтсе ывăна пуçланă.

— Эх, çынсем,—тенĕ вăл.—Çĕр чавалама та йĕркеллĕн пĕлмеççĕ. Эпĕ тытăнсан, ĕç икĕ минут хушшинчех пĕтнĕ пулĕччĕ.

Атьсемёр! Салтăр манăн аласене, парăр ятаган.

Турксем шухăша кайнă та, пĕр-пĕринпе канашлама пуçланă.

— Ну мĕн? (тенĕ вĕсем) унăн аллисене салтăпăр, парăпăр ятаган. Мĕнех вара? Вăл пĕччен, эпир çиччĕн.—Турксем вара унăн аллисене салтнă та ăна ятаган тыттарнă.

Тинех ĕнтĕ Кирджали ирĕке тухнă та хĕçпăшалланнă. Мĕн туйса тăмалла пулнă ĕнтĕ вăл!.. Вăл çивĕччĕн чавалама тытăннă, хуралçăсем ăна пулăшнă... Сасартăк вăл вĕсенчен пĕрне хăйĕн ятаганĕпе чикнĕ те, кăкăрĕнче булатне чикнипех хăварса, унăн пиçиххи хушшинчен икĕ пистолет туртса илнĕ.

Ыттисем, улттăшĕ, Кирджали икĕ пистолетпа хĕçпăшалланнине курсан, пăрахса тарнă.

Кирджали халĕ Ясса таврашĕнче вăрă-хурахла ĕççем туса çӳрет. Нумаях пулмасть вăл господарь патне пилĕк пин лев ыйтса, вăхăтра тӳлемесен, Яссăна çунтарса яратăп тесе хăратса, юлашкинчен, господарь патне çитетĕп тесе çырнă. Пилĕк пин лев ун патне леççе панă.

Мĕнлерех Кирджали?

КНИГОХРАНИЛИЩЕ ЦАУ ЧАССР
Инвент. № 6
КНИГОХРАНИЛИЩЕ ЦАУ. ЧАССР.
Инвент. № 6